Кольцов А.В. «Тӳпене хĕвел…»; «Сивĕ ҫил вĕрет…» : [сăвăсем] / А.В. Кольцов; [вырăсларан К.В. Иванов куҫарнă] // Чăваш литератури. – Шупашкар, 1951. – С.271.

## А. *В. КОЛЬЦОВРАН*

* * *

Тӳпене хĕвел
Улăхса ҫитнĕ,
Пĕҫертет, хĕртет
Тĕнчене хĕвел..
Пăчă сар хĕре,
Хирте хуйхăллă,
Пуҫлă ыраша
Вырасси килмест.

Хĕрсе ҫитнĕ хир
Ҫунтарать ăна;
Шурă пичĕ те
Хĕвелпе ҫунать.
Хулпуҫҫи ҫинчен
Пуҫĕ усăнать,
Ҫурли те ӳкет
Аллинчен унăн.

* * *

Сивĕ ҫил вĕрет,
Хаяр ҫил вĕрет;
Пĕлĕчĕ шăвать,
Хуп-хура пĕлĕт.
Курăнмасть унта
Ҫутă кун ҫутти,
Курăнмасть унта
Ҫут хĕвел ҫутти.

Сĕм-тĕттĕм ҫĕрте
Тĕтресем витĕр
Хура каҫ анчах
Хуралса тăрать.
Ҫакăн пек вăхăт,
Ҫак усал вăхăт
Пĕр пĕччен ҫынна
Чĕрине хĕсет.